Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

83 (8044) № ✻ Шăмат кун, 2012 çулхи юпа (октябрь) уйăхĕн 27-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Октябрĕн 28-мĕшĕ – Автомобиль транспорчĕн ĕçченĕсен кунĕ

Тӳпи унăн та пĕчĕк мар

Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче кăçал вырма ĕçĕсене хăй вăхăтĕнче тата пахалăхлă туса ирттерме пултарчĕç. 800 гектара яхăн лаптăк çинчи тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсен тухăçĕ гектар пуçне вăтам шутпа 20,3 центнерпа танлашрĕ.

Ĕç çи ăнăçлăхĕнче эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Иван Дмитриев водителĕн тӳпи те пĕчĕк мар. Вăл 1975 çултанпа автомашина водителĕнче вăй хурать. Кăçал хиртен комбайнсем патĕнчен йĕтем çине тырă турттарнă çĕрте хăйне лайăх енчен кăтартрĕ.

В. ШАПОШНИКОВ
сăн ӳкерчĕкĕ.

АВТОМОБИЛЬ ТРАНСПОРЧĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ!

Сире профессии уявĕпе саламлатăп!

Паянхи пурнăçра куçса çӳремесĕр май çук. Патшалăх политикин эффективлăхне пула республика территорине пĕтĕмпех пассажир автотранспорчĕн сечĕпе çыхăнтарнă. Паян кирек хăш яла та хăтлă рейс автобусĕпе çитме май пур, пур район центрĕнче те такси услугипе усă курма пулать. Куллен республика çулĕсем çинче 3290 автобус рейса тухать. Автотранспорт çыхăнăвĕпе 1015 яла çыхăнтарнă, 135 перевозчик хуласенчи 85, хула çывăхĕнчи 329 тата хуласем хушшинчи 153 маршрутпа çынсене илсе çӳрессине тивĕçтерет, Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенче троллейбус транспорчĕ татти-сыпписĕр ĕçлет.

Чăваш Енре пурăнакансен пурнăç шайĕ ӳссе пырать. 2009 çулхипе танлаштарсан республика территорийĕнче регистрациленĕ автомашинăсен хисепĕ 1,5 хута яхăн ӳснĕ, 187 пинрен 260 пине çитнĕ.

Транспорт хатĕрĕсене ГЛОНАСС борт устройствисемпе тивĕçтересси нумайланать. Ку системăпа пассажирсен обществăлла автотранспортне, васкавлă медицина пулăшăвĕн, коммуналлă службăсен автомашинисене çыхăнтараççĕ. ГЛОНАСС тата ГЛОНАСС/GPS системин бази çинче шкул автобусĕсен паркне спутник навигацийĕн приборĕсемпе тивĕçтернĕ. Çул-йĕр хăрушсăрлăхне ӳстерме видеофиксаци системин дирекцине туса хунă. Çакă çул-йĕр правилисене пăсассине чакарма пулăшма тивĕç.

Палăрăмлă çак улшăнусем çулсем çинчи лару-тăрăва лайăхлатаççĕ, çул çинче çӳрекенсен хăрушсăрлăх шайне тата çул çӳрессин культурине ӳстереççĕ.

Водитель профессийĕ хăйсен пĕтĕм пурнăç ĕçĕ пулса тăнă отрасль ветеранĕсене пур кăмăлтан тав сăмахĕ калатăп. Çамрăксем паян вĕсенчен тĕслĕх илеççĕ. Пурсăра та ырă сывлăх, телей тата ăнăçу сунатăп!

М. ИГНАТЬЕВ,
Чăваш Республикин Пуçлăхĕ.

Бюджет та пĕлтерĕшлĕ, çул та кирлĕ

Лару

Депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр 22-мĕш ларăвĕ октябрĕн 25-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче иртрĕ. Лару ĕçне депутатсемсĕр пуçне район администрацийĕн структура подразделенийĕсен ертӳçисем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, районти предприятисен, организацисен тата учрежденисен ертӳçисем те хутшăнчĕç.

Кун йĕркине кĕртнĕ ыйтусене пăхса тухнă май Муркаш районĕн бюджетне 2012 çулхи 9 уйăх итогĕсемпе мĕнле пурнăçланипе район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ Рената Ананьева паллаштарчĕ.

Ларăва хутшăнакансем депутатсен районти Пухăвĕн 2011 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнчи С-12/3 № «Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн 2012 çулхи бюджечĕ çинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртме йышăнчĕç.

Депутатсем пăхса тухнă тепĕр ыйту Муркаш районĕн муниципаллă харпăрлăхĕнчи пурлăха Йӳçкасси ял тăрăхĕн харпăрлăхне парасси çинчен пулчĕ. Лару йышăнăвĕпе Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Йӳçкасси ялĕнче Молодежная урамра вырнаçнă 1-мĕш номерлĕ хваттере район харпăрлăхĕнчен Йӳçкасси ял тăрăхĕн харпăрлăхне куçарчĕç.

Муниципаллă служба должноçĕсене ылмаштаракансен должноçри оклачĕсен виçисем, уйăхсерен тата ытти йышши хушса тӳлемелли виçесем пирки калакан положение улшăнусем кĕртесси, çакна туса ирттерессин йĕрки çинчен район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Лилия Тарасова каласа пачĕ. Çакă вăл ЧР Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе республикăри патшалăх учрежденийĕсенче вăй хуракансен шалăвĕсене кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 6 процент ӳстернипе çыхăннă.

Уйрăм депутатсем сĕннипе ларура тепĕр пĕлтерĕшлĕ ыйтăва та сӳтсе явма йышăнчĕç. Сăмах кунта Москакасси – Мăн Сĕнтĕр – Катькас автоçула сыхласа хăварасси пирки пырать. Пирĕн район территорийĕпе иртекен федераллă автотрассăна юсассипе ĕçсем пынă май йывăр тиевлĕ автомашинăсенчен нумайăшĕ тавра çулпа Катькас еннелле пăрăнса Москакассине Мăн Сĕнтĕр урлă тухать. Çула кун пек татти-сыпписĕр иртекен пысăк тиев валли пăхса хуман, вăл куç умĕнчех ванса пырать. Мăн Сĕнтĕрти кĕпер те ишĕлме пултарать.

Юлашки вăхăтра çак çул çинче аварисем пуласси те палăрмаллах ӳснине, çынсем вилнĕ тĕслĕхсем те пĕрре мар пулнине палăртрĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев. Тĕрлĕ органсене çырупа тухни те нимĕн те паман. Республика пĕлтерĕшлĕ çула хупса хума май çук.

Асăннă ыйтăва депутатсем хĕрӳ сӳтсе яврĕç. Нимĕн тумасăр пăхса ларма юрамасть. Çавăнпа та депутатсен районти Пухăвĕн йышăнăвĕпе прокуратурăна тата çула юсама çитес çул валли укçа-тенкĕ уйăрассипе республика Министрсен Кабинетне çырупа тухма йышăнчĕç, çула пăхса тăракан организацие çула сиен кӳнин калăпăшне палăртса акт хатĕрлеме сĕнчĕç.

В. ШАПОШНИКОВ.

АВТОМОБИЛЬ ТРАНСПОРЧĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ÇАК ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире хăвăрăн професси уявĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çăмăл мар, çав тери яваплă ĕç тăватăр эсир. Хăть мĕнле отрасльте вăй хурсан та хăвăрăн тивĕçĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăçлама тăрăшатăр. Чылай чухне кăткăс условисенче вăй хуратăр. Районăн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕшĕн тăрăшатăр. Тавах сире çакăншăн.

Çавăнпа пĕрлех эсир хăвăрăн ĕçĕр çынсен пурнăçĕпе çыхăннине те манса каймастăр. Эсир малашне те яваплă пуласса, хăвăрăн йăнăш ытла та хакла ларасса асра тытасса, çул çинче тимлĕ пуласса шанса тăратăп.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, телейлĕ те вăрăм кун-çул сунатăп. Ĕçĕрсем яланах ăнса, çулăрсем уçăлсах пыччăр. Инкек-синкек сирĕн çывăха та ан пытăр. Килте сире яланах çывăх çыннăрсем кĕтсе тăччăр.

Р. ТИМОФЕЕВ,
район администрацийĕн пуçлăхĕ.

Чăваш наци конгресĕ: 20 çул

Аслă Пуху ячĕпе

Чăваш Республикин Аслă Канашĕн Президиумĕн йышăнăвĕпе 20 çул каялла, 1992 çулхи юпа уйăхĕн 8–9-мĕшĕсенче, Шупашкарта Чăваш наци конгресĕн пĕрремĕш Аслă Пухăвĕ иртнĕ. Пурĕ 905 делегат суйланнă, вĕсенчен 885-шĕ хутшăннă.

ЧНК чăмăртаннăранпа 20 çул çитнĕ ятпа уявсем октябрĕн 26–27-мĕшĕсенче иртеççĕ.

Пĕрремĕш кунĕнче Наци библиотекинче Раççейри тата чикĕ леш енчи чăваш наци культура пĕрлĕхĕсен ертӳçисем «çавра сĕтел» ирттернĕ.

Паян 11 сехетре К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче ЧНК Мăн Канашĕн анлă ларăвĕ уçăлать. Ун хыççăн кунта 16 сехетре халăх уявĕ «Хĕр сăри» иртет.

Хушма пенси илме тытăнчĕç

Патшалăх пенсисене хушса финанслассин программине хутшăннă граждансем пенси çулне çитнĕ май хушма тӳлевсем илсе тăма тытăнчĕç. Çак вăхăта хушма тӳлев пама тытăнма 35 йышăну тунă. Акă районти пĕр пенсионерка 56 пин тенкĕне тивĕçнĕ. Ку вăл рядовой ĕçчен, почтальонкăра тăрăшать. Патшалăх пенсисене хушса финанслассин программине кирек кам та хутшăнма пултарать. Вăл епле пурнăçа кĕрсе пынă пирки Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхне Алексей КОНСТАНТИНОВА каласа пама ыйтрăм.

– Алексей Витальевич, айтăр-ха малтанах патшалăх пенсисене хушса финанслассин программин условийĕсем çинче чарăнса тăрар.

– Условисем ансат. Программăна хутшăнакан хăйĕн ирĕкĕпе пулас пенсине ӳстерме çулталăкне 2 пин тенкĕрен тытăнса 12 пин тенкĕ таран тӳлет. Патшалăх вара ăна çав сумма чухлех хушса парать. Кун пек тупăш нимĕнле банк та сĕнме пултараймасть! Çапла 10 çул хушши. Вăл вăхăтра Программăна хутшăнакан хăйĕн ирĕкĕпе взноссем тӳлеме пăрахма та, çĕнĕрен тӳлеме тытăнма та, çулленхи тӳлев виçине улăштарма та пултарать. Ыйтăва кашниех хăй тĕллĕн, хăйне килĕшнĕ пек татса парать. Патшалăх вара мĕн чухлĕ хывнине кура çавăн чухлех хăйĕн шутĕнчен куçарать. Пенси виçине ӳстермелли кун пек лайăх мел урăх çуках!

Çын пенси çулне çитнĕ, анчах та пенси шутласа пама ыйтса заявленипе пыман пулсан, ун валли Программăра уйрăм условисем пăхса хунă: кун пеккисен взносĕсене патшалăх 4 хут (!) ӳстерсе парать.

Патшалăхсăр пуçне Программăна хутшăнакан участниксен взносĕсене ĕç паракан та хушса финансламa пултарать. Унăн вăл налук тӳлессипе çăмăллăхсене тивĕçет.

– Программа участникĕсем валли налук тӳлессипе çăмăллăхсем палăртман-и?

– Çапла, Программăна хутшăнакан ĕçлекен çынсем хушма страховани взносĕсем тӳленинчен 13 процент чухлĕ налук вычетне тивĕçеççĕ. Ăна валли вĕсен налук инспекцине кирлĕ документсем çитерсе парас пулать. Сăмахран, Программа участникне çулталăкне 12 пин тенкĕ тӳленĕшĕн социаллă налук вычечĕ шучĕпе 1560 тенкĕ тавăрса параççĕ.

(Вĕçĕ 4-мĕш стр.)

Саламлатпăр

Пирĕн ĕçтешĕмĕре – Муркашри çыхăну узелĕнче инженерта ĕçлекен **Вячеслав Вениаминович МИХАЙЛОВА** юбилей ячĕпе ăшшăн, пур кăмăлтан саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей сунатпăр.

Салампа: пĕрле ĕçлекенсем.

Нумай çул хушши Шурчари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта биологипе химии учителĕнче ĕçленĕ, Кӳстерек ялĕнче пурăнакан **Галина Вениаминовна ДИМИТРИЕВĂНА** юбилей ячĕпе чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей сунатпăр. Сĕтелĕр çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, пур тăвансемпе, ял-йышпа пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр. Эпир сирĕнпе мухтанатпăр, эсир пурришĕн савăнатпăр.

Саламлаканĕсем: Шурчари пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ.

Ыйтăвĕ çав-çавах çивĕч-ха

Ял тăрăхĕсенче

Районти ялсенче пурăнакансене ĕçмелли пахалăхлă шывпа тивĕçтерессин ыйтăвĕ ытларах çĕрте çивĕч тăни вăрттăнлăх мар. 2008 çулта республика Президенчĕн Указĕпе йышăннă «Чăваш Республикинче пурăнакансене 2009 – 2020 çулсенче ĕçмелли пахалăхлă шывпа тивĕçтересси çинчен» тĕллевлĕ программа, ку ыйтупа депутатсен районти Пухăвĕ йышăннă тĕллевлĕ программа та çавăн çинченех калаççĕ.

Ерипенрех пулин те, лав вырăнтан тапранни савăнтарать. Акă нумаях пулмасть Ильинка ял тăрăхĕнчи Мемеккасси ялĕ патĕнче шыв уçламалли çĕнĕ башня çĕкленчĕ. Апла пулсан çынсене шывпа тивĕçтерессипе лайăх еннелле улшăнусем пулмалла. Кун пирки эпĕ Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхне Юрий ПЕРЦЕВА тĕплĕнрех каласа пама ыйтрăм.

– Малтанах çавна каласа хăварасшăн. Ял тăрăхĕн территорийĕнче пурĕ 17 ял, çынсен 1224 хуçалăхĕ. Ялсенче пурăнакансене шывпа тивĕçтерес ыйту чылай çĕрте питĕ çивĕч тăрать. Ку башньăна лартнипе эпир пур ял çыннисен ыйтăвне татса пама пултараймастпăр-ха. Ытларах çак башня Мемеккассинче пурăнакансем валли. Вăрманкассинче вырнаçнă башня юрăхсăра тухас пулсан вара кунтан Вăрманкассине, Ойкаса тата Шерĕке те шыв парса тăма май пулĕ. Сăмах май, Куçкин, Хунтăкасси, Хыркасси ялĕсенче, Апчар, Макаçи, Хопкĕпер ялĕсенчи хăш-пĕр урамсенче çак вăхăта шыв пăрăхĕсем те пачах çук.

Мемеккасси ялĕнче пурăнакансен пуçарулăхне ырă енчен палăртса хăвармалла. Хальхи вăхăтра макăрман ачана ĕмкĕч хыптармаççĕ тени тĕрĕсех. Шыв башни тума проект хатĕрлеме ял çыннисем хăйсем 60 пин тенкĕ укçа пуçтарса пачĕç. Çапла вара çĕнĕ объекта çĕклеме 2010 çулта экспертиза витĕр тухма пултартăмăр.

Башня тăвас ĕçсене «ПМК водоснабжения» чикĕллĕ яваплăхлă общество пурнăçлать. Тендерта вĕсем çĕнтерме пултарчĕç. Артезиан скважинине кăçалхи августăн 1-мĕшĕнче чавма пуçаннă. Çак вăхăта скважинăна чавса пĕтерсе башньăна вырнаçтарса лартнă ĕнтĕ. Скважина тарăнăшĕ 117 метр, башня диметрĕ 2 метра яхăн. Фундаментран тытăнса башньăна вырнаçтарса çирĕплетсе çитерес ĕçсем пĕр уйăха яхăн тăсăлчĕç.

Шыв башнине çĕклеме мĕн чухлĕ хыпкаланма тиврĕ пулин те, ку вăл çур ĕç кăна темелле. Ĕçлемелли, татса памалли ыйтусем татах нумай. 2010 çулхи хаксемпе шутласан пире строительство ĕçĕсене туса ирттерме республика бюджетĕнчен 7 миллион тенкĕ уйăрса пама пăхнăччĕ. Вăл шутран 2 миллион та 15 пин тенкĕ уйăрса панă. Строительство ĕçĕсене вара кăçал 2 миллион та 600 пин тенкĕлĕх туса ирттерме пăхнă. Апла пулсан ытти суммăна шырама тивет.

Черетре – патшалăх техника надзорĕн органĕсемпе килĕштерсе электрификаци ыйтăвĕсене татса парасси. Ку та çăмăл ĕçех мар. Шантарнине ĕненес пулсан, ку ĕçсене çĕнĕ çулччен вĕçлеме май пулĕ.

Кунпа пĕрлех башня йĕри-тавра санитари зонине йĕркелемелле, ку территорие карта тытса çавăрмалла. Çавăнтах çĕр айĕнче шыв запасĕ тытмалли пушар савăчĕ пулмалла. Пушар сўнтермелли автомашина кирек хăçан та унтан шыв уçласа илме пултартăр.

Çавна та каласа хăвармалла. Çак вăхăтчен ял тăрăхĕн территорийĕнче шыв уçламалли башньăсем 7 пулнă. Мемеккасси патĕнче вырнаçтарнă башня кăна ял тăрăхĕ çинче пулать. Ыттисем хуçасăр шутланаççĕ. Вĕсене ял тăрăхĕн харпăрлăхне куçарассипе те туса ирттермелли ĕçсен калăпăшĕ пĕчĕк мар.

Мемеккасси патĕнчи башньăна хута яни, паллă ĕнтĕ, Вăрманкассипе Ойкас тата Шерĕк ялĕсенче пурăнакансемшĕн те пысăк тĕкĕ пулĕ. Мĕншĕн тесен территорири ытти башньăсем пекех Вăрманкасси патĕнчи башня та совет саманинче хута янăскер. Вăл хăйĕн хăвачĕпе те 4 яла шывпа туллин тивĕçтерейместчĕ, çитменнине тăтăшах юрăхсăра тухатчĕ. Малашне асăннă ялсенче пурăнакансемшĕн ун пек йывăрлăх пулмалла мар.

В. ШАПОШНИКОВ
çырса илнĕ.

Сăн ўкерчĕкре: Мемеккассисен – çĕнĕ башня.

И. КАРГИН
сăн ўкерчĕкĕ.

Сирĕн ыйтусене хуравлатпăр

Налуксем пиркиех

Пурлăх налукĕсене тўлемелли вăхăт вĕçленсе пынă май редакци почтинче унпа çыхăннă ыйтусем сахал мар. Вĕсем çине Раççей Федералла налук инспекцийĕн Чăваш Республики тăрăх районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л. МИХАЙЛОВА хуравлама кăмăл турĕ.

– Çулталăк хушшинче транспорт хатĕрне регистрациленĕ е регистрацирен кăларнă пулсан транспорт налукне мĕнле йĕркепе шутласа параççĕ?

– Ăна çулталăкри тўлев виçине 12 уйăх çине пайлаççĕ те пулнă суммăна транспорт хатĕрĕ налук тўлекен харпăрлăхĕнче миçе уйăх пулни çине хутласа палăртаççĕ. Асăнса хăвармалла: автотранспорта регистрациленĕ е регистрацирен кăларнă уйăх та тулли уйăх шутне кĕрет. Апла пулсан ку уйăхшăн та налук тўлес пулать.

– Налук органне уйрăм çынсен транспорт хатĕрĕшĕн налук тўлемелли пирки сведенисем ăçтан пыраççĕ-ха?

– Патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕ, техника хатĕрĕсен техника шайне пăхса тăракан патшалăх надзор инспекцийĕ вырăнти транспорт хатĕрĕсене регистрацилени тата регистрацирен кăларни пирки, кунпа пĕрлех транспорт хатĕрĕсене кам çине регистрацилени пирки налук органĕсене пĕлтерме тивĕç: 10 кун хушшинче – транспорт хатĕрне регистрацилени е регистрацирен кăларни пирки; çуллен февралĕн 1-мĕшĕччен – унчченхи çулталăк хушшинче пур йышши транспорт хатĕрĕсем тата вĕсене камсем çине регистрацилени пирки, çулталăк хушшинче вĕсемпе çыхăннă пур улшăнусем пирки.

– Çĕр участокĕ уйрăм çынна еткерлĕх йĕркипе куçнă чухне çĕр налукне мĕнле палăртаççĕ?

– Налука РФ Налук Кодексĕпе тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен нормативпа право акчĕсемпе пăхнă пек шутласа параççĕ. Çĕрĕн унчченхи хуçи вилнĕ дата асăннă çĕр участокĕ еткерçĕне куçнă кун шутланать.

– Çĕр участокне сутнă чухне мĕн вăхăтшăн налук тўлемелле пулать?

– Енчен те çĕр участокне уйăхăн 15-мĕш кунĕ хыççăн сутнă пулсан, сутаканăн налук çав çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса сутнă уйăхшăн та тўлемелле пулать. Туянакан вара налука хыççăнхи уйăхăн 1-мĕшĕнчен тытăнса тўлет.

– Уйрăм çыннăн харпăрлăхĕнче икĕ е ытларах хваттер, çурт-йĕр е ытти те пулсан пурлăхшăн налук мĕнле илĕç?

– Пурлăхшăн тўлемелли налук ставкисене вырăнти халăх суйлакан хăй тытăмлăх органĕсем объектсен инвентаризаци хакне кура палăртаççĕ. Енчен те куçман пурлăх объекчĕсем пĕр муниципаллă пĕрлешўре пулсан, инвентаризаци хакĕсене пĕрле хушаççĕ те налук ставкине кура налук виçине палăртаççĕ. Объектсем тĕрлĕ муниципаллă пĕрлешўсенче чухне вара çакна уйрăмшар туса ирттерме тивĕç.

– Пурлăх пĕрлехи пай харпăрлăхĕнче пулсан пай хуçисен налук мĕнле йĕркепе тўлемелле пулать?

– Налук тўлемелли объект темиçе çын харпăрлăхĕнче шутланать пулсан вĕсем кашниех налука хăйсен пай виçине кура тўлĕç. Пурлăхăн пĕтĕмĕшле инвентаризаци хакĕ пайсен виçине кура пайланать.

– Пурлăха (хваттере) сутнă е туяннă хыççăн хăш вăхăтран тытăнса налук тўлеме тытăнмалла?

– Çурт-йĕр, строени харпăрлăха куçрĕ пулсан унăн çĕнĕ хуçи налука харпăрлăх правине илнĕ уйăхăн пуçламăшĕнчен тытăнса тўлет.

– Налук органĕ çынна мĕн вăхăтшăн налук тўлеттерме пултарать?

– Енчен те налук органне кирлĕ сведенисем тăратман пирки сире пурлăхшăн, транспорт хатĕрĕшĕн е çĕршĕн налук вăхăтра шутласа паман пулсан иртсе кайнă 3 çулшăн та налук çĕнĕрен шутласа пама пултараççĕ.

– Пĕрлехи налук уведомленине мĕнле адреспа ярса параççĕ?

– Налук уведомленине налук тўлекене регистрациленĕ адреспа ярса параççĕ. Енчен те кун пек уведомление илмен пулсан налук органне пырас пулать.

– Налука вăхăтра тўлесе татманшăн мĕн пулать?

– Енчен те эсир уведомленире палăртнă налука тўлемерĕр пулсан сире налук тўлемелли пирки требовани ярса параççĕ, унта пени тўлемелли пирки те пĕлтерни пулать. Требование хăй вăхăтĕнче пурнăçламасан вара налук органĕ требованипе пăхнă вăхăт тухнăранпа 6 уйăх иртнĕ хыççăн çыннăн пурлăхĕ шучĕпе налукпа пенисене тўлесе татасси пирки суда заявленипе тухма пултарать. Уйрăм çынран шыраса илмелли налук, пени, штраф виçи 1500 тенкĕрен иртет пулсан налук органĕ асăннă заявление суда ярса парать. Енчен те чи малтан ярса панă требование пурнăçламалли вăхăт тухнăранпа 3 çулталăк иртнĕ хыççăн та пĕтĕмĕшле шыраса илмелли сумма 1500 тенкĕрен иртмест пулсан 6 уйăх хушшинче налук органĕ каллех парăма шыраса илме суда заявленипе тухĕ.

Суда заявлени ярса парса парăма суд приставĕсем урлă шыраса илнĕ чухне парăмçăн хушма тăкаксем тума тивет, унран патшалăх пошлини 200 тенкĕ, шыраса илмелли суммăн 7 проценчĕ чухлĕ (анчах та 500 тенкĕрен кая мар) исполнительнăй тўлев тытса юлаççĕ.

Аса илтеретпĕр: уйрăм çынсен налук тўлемелли вăхăчĕ ноябрĕн 1-мĕшĕнче тухать. Никамăн та парăмçăсен шутне лекес марччĕ.

В. ШАПОШНИКОВ
калаçнă.

Муркаш кĕперне çапла тунă

Истори

Историе кашнин пĕлмелле тата ăна упрама тăрăшмалла. Халĕ вара вăтăр çул каяллахи тапхăрпа кăсăкланар-ха (Л.С. Софронов сĕннипе).

Ун чухне КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Валериан Семенович Краснов пулнă, райсовет ĕçтăвкомĕн председателĕнче Леонид Софронович Софронов тăрăшнă. Тивĕçлĕ канăва тухнă, районшăн ырми-канми тăрăшнă хисеплĕ çыннăмăрсем халĕ район хаçачĕпе, коллективĕпе тачă çыхăну тытаççĕ, хăйсен шухăшкăмăлĕсене палăртаççĕ.

Пĕтĕмĕшле илсен çав тăпхăрта район экономикин аталанăвĕ, çурт-йĕр тата ытти объект çĕклесси, çавăн пекех ял хуçалăх ĕçĕсем тулли хăватпа пынă. Вăл вăхăта тишкерсен çакă курăнать:

«Муркаш районĕнчи ĕç çыннисем 1982 çулхи плансене ăнăçлă пурнăçлас тата ССР Союзне туса хунăранпа 60 çул çитнине чыслăн кĕтсе илес тĕлĕшпе социализмла обязательствăсем йышăннă. Вĕсене районти промышленноçпа суту-илў; йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕç, колхозсемпе совхоссен, организацисемпе учрежденисен коллективĕсенче сўтсе явнă. Çакна халăх хуçалăх активĕн районти слетĕнче 1982 çулхи январĕн 11-мĕшĕнче йышăннă».

Социализмла обязательствăсенче малалла çакăн пек самантсене палăртнă:

«Иртнĕ çул строительствăра 6,6 миллион тенкĕлĕх капиталовложенисемпе усă курнă, чылай объекта хута янă. Кăçал вара 8 миллион тенкĕлĕх капиталовложенисем уйăраççĕ. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан ĕç тухăçлăхне 1,5 процент ўстермелле, строительствăпа монтаж ĕçĕсен хăй хаклăхне планпа палăртнинчен 0,5 процент чакармалла.

Çавна май çак объектсене хута ямалла:

– Ильич ячĕпе хисепленекен колхозра Культура çуртне, Тренккă ялĕнче вăтам шкул çуртне, «Передовик» совхозра ача садне тата тасатмалли сооружение, çавăн пекех районти «Сельхозтехника» тата «Сельхозхими» пĕрлешĕвĕсен, райсовет ĕçтăвкомĕн пурăнмалли çурчĕсен пĕтĕмпе 3140 тăваткал метрне, Муркаш – Шаптак автоçул урлă хывакан икĕ кĕпере, хуçалăхсем хушшинчи 240 вырăнлăх пионер лагерьне тата чылай ытти объектри (малалла асăнмăп **– автор) ĕçе пурнăçламалла.**

Çак объектсене тума пуçăнмалла:

– Ленин ячĕпе хисепленекен колхозри плотинăна, районти «Сельхозхими» пĕрлешĕвĕнче автомашинăсен гаражне, район центрĕнче суту-илў центрĕн çуртне, стадионпа гостиницăна тата аптекăна (кунта та кашни объекта асăнмăп **– автор)».**

Çакăнта, паллах, пĕр ыйту çуралать. Мĕнле укçа-тенкĕпе тата кам пулăшнипе?

Çўлерех асăннă хута ямалли çĕнĕ объект чылай, халĕ вĕсенчен пĕринпе çыхăннă ĕç-хĕле тишкерĕпĕр. 1959 çулхи апрелĕн 7-мĕшĕнче РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн «Об участии колхозов, совхозов, промышленных, транспортных, строительных и других предприятий и хозяйственных организаций в строительстве, реконструкции, ремонте и содержании автомобильных дорог» Указĕ кун сути курнă. Çавна май райĕçтăвком 1982 çулхи августăн 4-мĕшĕнче Муркаш шывĕ урлă кĕпер хывас ĕç валли хушма укçа-тенкĕ

тупас-явăçтарас тĕлĕшпе 317 № йышăну каларнă. Çўлерех асăннă самантсене тĕпе хурса «Новая Юнга» колхоз – 5000 тенкĕ, Ленин яч. хис. кол. – 12000 тен., Киров яч. хис. кол. – 17000 тен., «Сеятель» кол. – 17000 тен., Ильич яч. хис. кол. – 10000 тен., «За коммунизм» кол. – 19000 тен., К. Иванов яч. кол. – 16000 тен., «Дружба» кол. – 8000 тен., Чапаев яч. хис. кол. – 10000 тен., «Герой» кол. – 2000 тен., «Гигант» сов. – 1500 тенкĕ Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăх капиталовложени счечĕ çине куçарма палăртнă.

Леонид Софронович вăл тапхăр пирки çапла аса илет:

– Çапла вара 1959 çулхи Указа вăя кĕртме счет çинче 300 пин тенкĕ укçа пухăнчĕ. Муркаш – Москакасси автоçул çинче маларах йывăçран тунă кĕпер пулнă. Çавăнпа та ун урлă пысăк тиев турттаракан автотранспорт каçаймастчĕ. Район шайĕнче ăна тăвасси пирки тĕрлĕ калаçу пулчĕ: пĕрисем плотина тăвасшăн, теприсем – кĕпер.

Çапла вара пĕр шухăш патне тухрăмăр, çĕнĕ йышши тимĕр бетон кĕпер тăвасси пирки йышăну турăмăр, 36 метр тăршшĕ кĕпер проектне хатĕрлерĕмĕр. Кунти пĕтĕм ĕç-хĕл сакăр уйăха тăсăлчĕ.

Валериан Семенович каланинчен:

– Вăл çулсем халĕ те асрах-ха. Каçса çўреме питĕ япăхчĕ. Ку кĕпере тунă çĕрте вара Леонид Софронович питĕ нумай тăрăшрĕ.

Çакăнсăр пуçне районта объект хыççăн объект хута ятăмăр. Паянхи кун вара тĕлĕнмелле пек те туйăнать, епле-ха çавăн чухлĕ вăй-хал çитернĕ. Пĕр çултах 5 шкул, шкул çулчченхи ачасен 3 учрежденийĕ хута ятăмăр. Çавăншăн пирĕн район Раççей Федерацийĕн Çут ĕç министерствин ялавне тивĕçрĕ. Мĕн пурнăçлани йăлтах куç умĕнче, кунта хитрелетсе каланă сăмах çук. Паянхи ĕçченсен вара ку таранччен çĕкленине тивĕçлĕ шайра тытмалла тата упрамалла, çавăн пекех çĕнĕ объектсем хута ямалла.

Кĕпер пирки сăмах тапратнă май çакна та палăртса хăваратăп. 1981 çулта Штранкă шывĕ çинче, 1983 çулта Шурча тата Хорнуй кĕперĕсене тунă.

Паян Муркаш кĕперĕ урлă куллен çĕршер çын каçса çўрет. Асра тытар: ăна вăтăр çул каялла хута янă. Кĕпере тăвассишĕн тимленисем пирĕн хушăра. Пысăк тав вĕсене!

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Çамрăк «Шумахерсем» ответлăх пирки пĕлмеççĕ

Арçын ача пĕчĕкренех ашшĕ çумĕнче тăрмăшса техникăна хăнăхнине, паллах, пурте ырлатпăр. Юлашки вăхăтра вара шкулта вĕренекен арçын ачасемех кивĕ çăмăл машинăна хăйсем юсаса çӳрекен туни те ытлашшиех тĕлĕнтермест. Пултарулла, маттур ачасем ӳсеççĕ темелле.

Çул çитменнисем хушшинчех çуллахи каникул вăхăтĕнче аслисемпе инçетри стройкăна кайса ĕçлесе çăмăл машина туянакансем те пур. Кунта каллех хăйсен тĕллевне пурнăçлас тесе ĕçлеме ӳркенменни палăрать. Анчах та пĕр енчен çак стройкăсем ачасем валли пысăк хăрушлăх кăларса тăратаççĕ, тепĕр енчен вара – хăйсем туяннă е юсанă машинăсемпе пачах та опытсăрскерсем, çитменнине тата правасăр çула тухаççĕ. Малалла мĕн пулма пултарасси çамрăксен пуçне ватмасть. Район администрацийĕ çумĕнчи çул çитменнисен тата вĕсен прависене хӳтĕлекен комиссин черетлĕ ларăвĕ те çакнах çирĕплетсе пачĕ.

Акă октябрь уйăхĕнче Автанкасси – Муркаш – Козьмодемьянск çул çинче çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекторĕсем кивĕрех çăмăл машинăна чараççĕ. Машинăра – çамрăксем. Çатракассинчи вăтам шкулта вĕренекенсем Муркаша пицца çиме кайма тухнă иккен. Хăйсен пĕлĕшĕ çулла ĕçлесе килнĕ хыççăн машина туяннине пурте пĕлнĕ, паллах. Çапла вара уроксем вĕçленсен машина хуçине Муркаша кайма ӳкĕте кĕртнĕ.

– Юлташсене хирĕç пулас килмерĕ, – тет машина хуçи, 11 класра вĕренекенскер, çула мĕншĕн тухнине ыйтсан.

– Вĕсем сан права çуккине пĕлнĕи? Эсĕ водителе ăçта та пулин вĕреннĕ-и? Çак çул çинче тăтăшах аварисем пулнине илтнĕ-и? – ыйту çине ыйту çуралчĕ комисси членĕсен.

11 класс ачин, паллах, права çук, вăл водителе ниçта та вĕренмен, çав çул çинче инкексем сахал мар пулнине те «астумасть». (Ку тĕслĕх комисси ларăвĕсенче тĕл пулнă пĕртен-пĕр тĕслĕх мар.)

– Эсир машинăпа кайма пĕлни питĕ лайăх, анчах та хăрушлăхĕ мĕн пысăкăш! Апла мар опытлă водительсем аварисене лекеççĕ. Юрать, хăвăрпа нимĕн те япăххи пулман. Çавăнпа та кашни утăма шухăшласа тумалла, – асăрхаттарчĕç çамрăка.

Комисси, паллах, асăрхаттарать: ачан шăпи шухăшлаттарать-çке. Саккунпа вара çак ĕç-пуçшăн халĕ çамрăкăн 2500 тенкĕ административлă штраф тӳлеме тивет. Кукамăшĕпе пурăнаканскер штрафа вăхăтра тӳлессине шантарчĕ. «Машинăна сутатăп та водителе вĕренетĕп», – каччăн татăклă шухăш та пулчĕ. Апла юлташсен шухăшне итлесси кăна мар, хăйĕн шухăшне мала хурасси те пур çамрăкăн. Ку питĕ лайăх. Комисси ларăвĕ хыççăн вара яш «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче шкул командипе баскетбол ăмăртăвне хутшăнасса пĕлтерчĕ. Апла унпа пулса иртнĕ «йĕрке урокĕ» тата комисси асăрхаттарăвĕ унăн пурнăçĕнче кая юлса пулмарĕ пулас. Çамрăкăн пурнăçĕнче ырă ĕçсемпе тĕллевсем кăна пуласса шанас килет.

Н. НИКОЛАЕВА.

Хăрушсăрлăх – хамăр алăра

Юлашки вăхăтра Муркашри Парковая урамри нумай хваттерлĕ çуртсенчен ют пурлăха вăрланă тĕслĕхсем пулни унта пурăнакансене самаях пăшăрхантарать. Паллах, хамăра хӳтлĕхре туясси хамăр асăрханнипе тата тимлĕ пулнипе çыхăннă. Анчах та кукăр алăсене тепĕр чух ку та ура хумасть.

Вăрăлла ĕçсене тата йĕркене пăсассинчен пĕтĕмĕшле асăрхаттарас тĕллевпе октябрĕн 20-мĕшĕнче Парковая урамри 2 тата 4-мĕш çуртсенче пурăнакансемпе тĕл пулу иртрĕ. Шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е. Плечов, унти хăш-пĕр уйрăмсен пуçлăхĕсемпе Муркаш ялне пăхса тăракан О. Яковлев участковăй хваттер хуçисемпе профилактика калаçăвĕ ирттерчĕç. Тĕл пулăва районти «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» общество ертӳçипе Н. Любимовпа Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С. Ермолаев та хутшăнчĕç.

Профилактика калаçăвĕ тĕрлĕ енлĕ иртрĕ. Апла пулин те паянхи кун видеосăнав оборудованине вырнаçтарни преступленисене асăрхаттарассин пĕр енĕ шутланнине палăртмалла. Маларах асăннă çуртсенче пурăнакансем те çакна ăнланса ку оборудование вырнаçтарни меллĕ пулмаллине палăртрĕç. Халĕ вара ку тĕлĕшпе ĕç пуçăнасси хваттерсенче пурăнакансен пуçарулăхĕнчен те сахал мар килет.

Н. ДИМИТРИЕВА.

Полици хроникинчен 12+

Вăйĕ пур та ăсĕ çук

Хĕрарăмсем вăйланса пынине вĕсем ертӳçĕсен должноçĕнче ĕçленинче кăна мар, тепĕр енĕпе та асăрхама пулать. Акă Мăн Сĕнтĕрте пурăнакан пĕр «вăйлă» хĕрарăм хăйĕнпе пĕрле пурăнакан арçынпа хирĕçсе каять. Хваттерте харкашу тухать. Хĕрарăм арçынна пуçĕнчен кĕленчепе çапать. Анчах çакăнпа кăна лăпланмасть: алла çĕçĕ илсе арçынна темиçе хутченех тирет. Ирĕксĕрех вăйĕ пур та ăсĕ çук тенипе килĕшме тивет.

Ку тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Явап нумай кĕттермĕ.

«Чечек çыххи» – хăйне валли

Юратнă хĕрарăмшăн чуна шуйттана та пама хатĕр тесе ахаль юрламаççĕ пулĕ эстрадăри арçынсем. Акă Шупашкарта пурăнакан арçын та хăйĕн малтанхи мăшăрĕнчен ниепле те уйрăлса пĕтеймест. Хытах юратнă курăнать.

Хутпа уйрăлнă-ха вĕсем, арçыннăн чунĕ вара малтанхинех савать-ши? Е тата урăх сăлтавпа-ши çак çын малтанхи арăмĕ пурăнакан Иштерек ялне темиçе те килсе каять. Ахаль мар – хĕрарăма тăн кĕртме: хĕнесе те хăварать, вĕлерессипе те хăратать. Çапла вара хăйне валли пысăк «чечек çыххи» хатĕрлет: пуçарнă уголовлă ĕçсен шучĕ халĕ пĕрре-иккĕ кăна мар. Апла айăплав та тивĕçлĕ пулĕ.

«Кукăр алăн» куçĕ çивĕч

Мăн Шашкарти пĕр хуçалăх пахчи хĕле хатĕрленсе çитейменнине пĕр «кукăр алă» часах асăрханă. Çулла шыв ярса лартнă алюмини хурансене хуралтăсене кĕртсе хурайман, кунсăр пуçне тата сарайпа юнашарах мотоцикл та тăнă. Шăмат кун тĕттĕм пуличчен çак япаласем вырăнтах пулнă-ха, тепĕр ирччен вара вĕсем çухалнă.

Уголовлă ĕç пуçарма хатĕрленсе ку ĕçе халĕ следовательсем тишкереççĕ.

Пичете Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.

«Полици тата ачасем» акци

Ачасем аслисенче лайăххине кăна курччăр

Пĕр уйăх – сентябрĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 19-мĕшĕччен – районта «Полици тата ачасем» акци иртрĕ.

Республикăра çул çитменнисем тунă преступленисен тĕслĕхĕсене тишкернĕ май йĕркене пăсакансенчен ытларахăшĕ (80 процент ытла) шкул ачисемпе студентсем пулни палăрать. Вĕсем вара чылайăшĕ вăйра тăракан саккунсене пĕлмеççĕ. Преступленисем тума çул паракан тепĕр ен – ачасемпе çамрăксем шута хумалла мар сăлтавсене пула занятисене сиктерни. Преступленисене ытларах ирпе-кăнтăрла туни те çакнах çирĕплетет.

Районти акцие çул çитменнисемпе ĕçлекен подразделени инспекторĕсем кăна мар, участковăйсемпе оперуполномоченнăйсем, ытти службăсен сотрудникĕсемпе вĕрентӳ сферин ĕçченĕсем те хутшăнчĕç.

Çак вĕренӳ çулĕ пуçланиччен Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн сотрудникĕсене районти шкулсем çумне çирĕплетнĕ. Çапла майпа вĕрентӳ учреждениййĕсенче профилактика тĕллевĕпе ачасемпе пурĕ 49 тĕл пулу ирттернĕ, ятарлă фильмсем кăтартнă. Пай сотрудникĕсем ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕсенче те йĕркене пăсассинчен асăрхаттарасси пирки тухса калаçнă.

Акци вăхăтĕнче çул çитмен пĕр ачана йĕркене пăснăшăн учета илтĕмĕр. РФ Административлă майпа право йĕркисене пăснин кодексĕн 5.35 статйин 1 пайĕнче пăхса хунине (ашшĕ-амăшĕсен хăйсен тивĕçĕсене йĕркеллĕ пурнăçлассипе çыхăннă) шута илсе 9 çынна явап тыттарма протокол çырма тиврĕ. Акци вăхăтĕнчи рейдсенче çул çитменнисене пирус тата алкоголь продукцине сутнине те тупса палăртрăмăр. Çакă аслисем çул çитменнисен умĕнчи яваплăха туллин туйманни пирки калать. Апла ашшĕ-амăшĕсен, аслă ăру çыннисен хăйсене те хак памалла: ачасем вĕсем çине пăхса лайăх енсем кăна курччăр.

В. АЛЕКСЕЕВ,
çул çитменнисемпе ĕçлекен подразделени ертӳçи.

В память об учителе

В августе ушла из жизни Каргина Анфиса Александровна, учитель математики Шомиковской ООШ. Не стало на земле любящей, нежной, заботливой, мудрой жены, матери, подруги.

Не стало на земле замечательного человека.

Всю свою сознательную жизнь Анфиса Александровна посвятила работе в школах Моргаушского района. Труженица, выдумщица, энергичная и жизнерадостная, она приходила к ученикам в класс и брала их в свой плен, учила не только считать, решать, думать, но и самому главному – дружить, любить людей.

Ученики верили своему учителю, потому что видели перед собой учителя, у которого слово не расходилось с делом. Как много человек может с признательностью произнести, что Анфиса Александровна изменила их жизнь к лучшему.

Она была творческим, активным, неравнодушным человеком, она была наставником начинающим учителям, она человек открытой гражданственной позиции.

Сколько силы, мужества, добра жило в сердце такой хрупкой, изящной женщины …

Оля Макарова посвятила её памяти стихи.

Из нашей жизни ушла она –
Анфиса Александровна Каргина.
Не услышать нам больше её смех,
Её потеря – большая беда для всех.
Она была хорошим другом,
Отличной мамой, педагогом.
Мы сохраним в сердце её слова,
Которые запомнились нам навсегда.
Её глаза – мерцание кристалла
И жизнерадостный цвет огня!

Коллектив учителей и школьников Шомиковской ООШ выражают глубокое соболезнование родственникам по поводу кончины. Скорбим вместе с вами.

ОАО «ГАЗПРОМ» ФИЛИАЛ ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород»

ЧЕБОКСАРСКОЕ ЛИНЕЙНОЕ ПРОИЗВОДСТВЕННОЕ УПРАВЛЕНИЕ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ

УВЕДОМЛЕНИЕ

ЧЕБОКСАРСКОЕ ЛИНЕЙНОЕ ПРОИЗВОДСТВЕННОЕ УПРАВЛЕНИЕ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ УВЕДОМЛЯЕТ юридических и физических лиц, владеющих и обрабатывающих землю или (и) производящих работы в Моргаушском районе Чувашской Республики, что на территории Моргаушского района находятся магистральные газопроводы (МГ) и газопроводы-отводы (далее по тексту - газопроводы), эксплуатируемые под рабочим давлением до 75 кг/см2. Глубина залегания газопроводов (от верхней поверхности трубопроводов) составляет не мене 0,8 метров.

«Правилами охраны магистральных трубопроводов», утв. ГГТН РФ 24.04.92г. (внесены дополнения 23.11.94 г), в целях обеспечения нормальных условий эксплуатации и исключения возможности повреждения газопроводов устанавливаются охранные зоны по 25 м (по суше) и 100 м (для подводных переходов) в обе стороны от оси любого газопровода.

Минимальное расстояние от газопроводов до объектов различного назначения установлено на основании СНиП 2.05.06-85* и для находящихся на территории района газопроводов составляет от 100 метров до 350 метров.

В охранных зонах газопроводов запрещается производить всякого рода действия, могущие нарушить нормальную эксплуатацию трубопроводов, либо привести к их повреждению, в частности:

а) перемещать, засыпать и ломать опознавательные и сигнальные знаки, контрольно - измерительные пункты;

б) открывать люки, калитки и двери необслуживаемых усилительных пунктов кабельной связи, ограждений узлов линейной арматуры, станций катодной и дренажной защиты, линейных и смотровых колодцев и других линейных устройств, открывать и закрывать краны и задвижки, отключать или включать средства связи, энергоснабжения и телемеханики трубопроводов;

в) устраивать всякого рода свалки, выливать растворы кислот, солей и щелочей;

г) разрушать берегоукрепительные сооружения, водопропускные устройства, земляные и иные сооружения (устройства), предохраняющие трубопроводы от разрушения, а прилегающую территорию и окружающую местность - от аварийного разлива транспортируемой продукции;

д) бросать якоря, проходить с отданными якорями, цепями, лотами, волокушами и тралами, производить дноуглубительные и землечерпальные работы;

е) разводить огонь и размещать какие-либо открытые или закрытые источники огня.

В охранных зонах трубопроводов без письменного разрешения предприятий трубопроводного транспорта запрещается:

а) высаживать деревья и кустарники всех видов, складировать корма, удобрения, материалы, сено и солому, располагать коновязи, содержать скот, выделять рыбопромысловые участки, производить добычу рыбы, а также водных животных и растений, устраивать водопои, производить колку и заготовку льда;

б) сооружать проезды и переезды через трассы трубопроводов, устраивать стоянки автомобильного транспорта, тракторов и механизмов, размещать сады и огороды;

в) производить мелиоративные земляные работы, сооружать оросительные и осушительные системы;

г) производить всякого рода открытые и подземные, горные, строительные, монтажные и взрывные работы, планировку грунта.

Письменное разрешение на производство взрывных работ в охранных зонах трубопроводов выдается только после представления предприятием, производящим эти работы, соответствующих материалов, предусмотренных действующими Едиными правилами безопасности при взрывных работах;

д) производить геологосъемочные, геологоразведочные, поисковые, геодезические и другие изыскательские работы, связанные с устройством скважин, шурфов и взятием проб грунта (кроме почвенных образцов).

Владельцы земельных участков не могут строить какие бы то ни было здания, строения, сооружения в пределах установленных минимальных расстояний до объектов системы газоснабжения; такие владельцы не имеют права чинить препятствия организации - собственнику системы газоснабжения или уполномоченной ею организации в выполнении ими работ по обслуживанию и ремонту объектов системы газоснабжения, ликвидации последствий возникших на них аварий, катастроф. (ФЗ от 31.03.1999 г. № 69-ФЗ «О газоснабжении в РФ»).

Органы исполнительной власти и должностные лица, граждане, виновные в нарушении правил охраны магистральных трубопроводов, газораспределительных сетей и других объектов систем газоснабжения, строительстве зданий, строений и сооружений без соблюдения безопасных расстояний до объектов систем газоснабжения или в умышленном блокировании либо повреждении, иных нарушающих бесперебойную и безопасную работу объектов систем газоснабжения незаконных действиях, несут ответственность в соответствии с законодательством Российской Федерации.

Здания, строения и сооружения, построенные ближе установленных строительными нормами и правилами минимальных расстояний до объектов систем газоснабжения, подлежат сносу за счёт средств лиц допустивших нарушения.

Материальный ущерб, нанесённый организации – собственнику системы газоснабжения в результате умышленного её блокирования или повреждения либо иных нарушающих бесперебойную и безопасную работу объектов систем газоснабжения незаконных действий, возмещается в установленном порядке виновными лицами или принявшими противоправные решения лицами.

При рассмотрении соответствующими органами ходатайства о предоставлении земельных участков для указанных целей место расположения объектов строительства должно предварительно согласоваться с ЛПУМГ. Перед началом работ необходимо получить письменное разрешение Чебоксарского ЛПУМГ на производство работ в охранной зоне магистрального трубопровода. Производство работ без разрешения или по разрешению, срок действия которого истек, ЗАПРЕЩАЕТСЯ.

Получив разрешение на производство работ в охранной зоне магистрального трубопровода, необходимо до начала работ вызвать представителя Чебоксарского ЛПУМГ для установления точного местонахождения трубопровода, определения его технического состояния и взаиморасположения с сооружениями проектируемого (строящегося) объекта. В процессе строительства необходимо письменно за 5 суток до начала уведомить Чебоксарское ЛПУМГ о времени производства тех этапов работ, специально указанных в выданном разрешении при которых необходимо присутствие представителя Чебоксарского ЛПУМГ.

По всем вопросам, относительно производства земляных работ в зонах газопроводов, обращаться по адресу:

428027, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 25, Филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» – Чебоксарское ЛПУМГ, тел. 8-(8352) - 30-54-09, 30-54-22.

ПЕНСИОНЕР

РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн кăларăмĕ

Хушма пенси илме тытăнчĕç

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

– Халĕ Программăна кам хутшăнма пултарнине уçăмлатар-ха.

– Асăннă Программăна çамрăксем те, çулланнисем те хутшăнма пултараççĕ. Заявленисене 14 çултан пуçласа йышăнаççĕ. Кил хуçи хĕрарăмĕсен, предпринимательсен, яланхи ĕç суккисен пурин те асăннă Программа участникĕсем пулмалла тесе шухăшлатăп. Шăпах ĕнтĕ вĕсен кайран вăтам пенси илме шанăç сахалрах. Программăна хутшăнса хăйсен пулас пенси виçине ӳстерме халĕ пенси илсе тăракансен те май пур. Çапах та пенси пирки ытларах çамрăксен шухăшлас пулать. Мĕншĕн тесен Программăна хутшăнса 10 çул хушшинче ватлăх çулĕсем çитнĕ тĕле чылай пысăк сумма пухса çитерме май пур. Банкра ку суммăна пухма чылай ытларах вăхăт кирлĕ. Çитменнине укçа-тенкĕне пенси валли мар, урăх тĕллевпе усă курассин астармăшĕ çĕнтерме пултарать.

– Çын вара пенсие тухиччен пурăнаймасан?

– Кун пек чухне харпăр хăйĕн взносĕсене те, патшалăх хушса тӳленине те, укçа-тенкĕне инвестициленинчен илнĕ тупăша та унăн еткерĕсем тивĕçеççĕ. Пирĕн районта кун пек тĕслĕхсем пур ĕнтĕ. Программа вăя кĕнĕренпе 3 çул хушшинче пухăнакан пенси суммине илессипе вилнĕ çын еткерĕсенчен 207 заявлени йышăнтăмăр та.

– Программăна хутшăнас тесен мĕн тумалла?

– Вариантсем нумай. Çын хăй Пенси фончĕн управленине пырса е ĕç паракан урлă заявлени пама пултарать. Интернета тухма май пулсан килтен ниçта каймасăрах Программа участникĕ пулса тăма май пур – патшалăх услугисен gosuslugi.ru порталне кĕмелле кăна. Заявленисене çавăн пекех алă пуснисене çирĕплетессипе Пенси фончĕпе килĕшӳ тунă банксемпе патшалăхăн шутланман пенси фончĕсем те йышăнаççĕ.

Кунпа пĕрлех заявлени çырассине кая хăвармалла марри пирки те манма кирлĕ мар. Вĕсене йышăнасси 2013 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕçленет. Патшалăх пулăшăвне тивĕçме вара асăннă кунччен пĕрремĕш взнос хывни кирлĕ.

– Взноссене мĕнле тӳлеме пулать?

– Ĕçлекен çынсемшĕн чи ансат мел кунта – ĕçлекен вырăнта ĕç укçинчен куçарса тăрасси. Çавна валли мĕнле сумма куçарса тăмаллине кăтартса ертӳçĕ ячĕпе заявлени çырса памалла. Асăннă суммăна уйăхсерен бухгалтери Пенси фондне куçарса тăрĕ.

Çавăн пекех взноссене çынсем хăйсем банка пырса та тӳлеме пултараççĕ. Кунта хăш-пĕр вариантсем пур. Йăлана кĕни – хăвах квитанци çыратăн та банк сотрудникĕ патне пыратăн. Кунпа пĕрлех ятран паракан штрих-кодлă хатĕр квитанцие Пенси фондĕнче илме май пур. Ун çинче суммăна кăтартса взноса банкăн тӳлев терминалĕ урлă тӳлес пулать.

Тепĕр вариант та пур – взноссене банк карттипе усă курса е алăри укçан Перекет банкĕн тӳлев терминалĕсем урлă тӳлесси. Çавна валли тӳлевсен йышăнăвĕн пайне суйласа илмелле те обязательнăй пенси страхованийĕн свидетельстви çинчи лицевой счет номерне кăтартса паллă тумалла. Ку мелпе чылайăшĕ коммуналлă усугăсемшĕн, çыхăнушăн, Интернетшăн т. ыт. те тӳлесе тăрать. Кунпа пĕрлех хальхи вăхăтра тӳлеве Интернет, республикăри ытти банксен сомообслуживани устройствисем урлă хывассин ыйтăвне те татса пама хатĕрленеççĕ.

– Программăна хутшăнакан çын хушма пенсие хăçан илме тытăнать-ха?

– Пенсие тухма вăхăт çитсен тӳрех е вăхăт çитмесĕрех пенсие тухсан та. 2012 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса Раççей Пенси фончĕ тата патшалăхăн шутланман пенси фончĕсем завленисем йышăнаççĕ, тӳлевсем палăртаççĕ ĕнтĕ.

Программăна хутшăнакансенчен хăшĕсене пенси тӳлевне уйрăм тапхăрта парса татма пултараççĕ. Унăн виçи Программăна хутшăнаканăн взносĕсенчен, патшалăх хушса тӳленинчен тата укçа-тенкĕне инвестициленинчен илнĕ тупăшран пуçтарăнать. Ăна 10 çул хушши е ытларах тапхăр (Пограмма участникĕ палăртать) тӳлесе тăрĕç. Пухăнакан пенсие уйрăм тапхăрта тӳлеме расчетсене кура пенсин пĕтĕм виçинче хушма пенсин уйăхри сумми 5 процент ытла пулсан палăртаççĕ.

Программăна хутшăнакансен ытларах пайĕ вара пенсин пухăнакан пайне пĕр харăс илет. Укçа-тенкĕне пенсионерăн банк счечĕ çине куçараççĕ е пенсипе пĕрле почта урлă параççĕ. Тепĕр хут каласа хăваратăп, паянхи куна районта пенсин пĕр хут паракан чи пысăк хушма виçи 56 пин тенкĕпе танлашать. Çак суммăна пенсионерка Программăна хутшăнса 3 çул хушшинче 26 пин тенкĕ тӳленĕшĕн тивĕçет. Çапла вара вăл 26 пин тенкĕ хăй тӳленĕ, тепĕр 26 пин тенкĕ ăна патшалăх хушса тӳленĕ, 4,1 пин тенкĕ – инвестици тупăшĕ. Апла пулсан патшалăх пенсисене хушса финанслассин программи – патшалăхăн пурнăçа кĕнĕ социаллă проекчĕ.

– Хушма тӳлеве илме ăçта пымалла?

– Енчен те Программа участникĕ патшалăхăн шутланман пенси фондне суйласа илнĕ пулсан, заявленипе ку пенси фондне пырас пулать. Ытти тĕслĕхсенче – регистрациленĕ вырăнти Пенси фончĕн управленине.

Патшалăхăн шутланман пенси фончĕсен тата вĕсен регионсенчи офисĕсен адресĕсемпе телефонĕсене РФ Пенси фончĕн сайтĕнче (www.pfrf.ru) вырнаçтарнă. Вĕсемпе çыхăнмалли даннăйсен информацине Раççей Пенси фончĕн талăкĕпех çыхăнмалли тӳлевсĕр телефонĕпе (8-800-505-55-55) шăнкăравласа пĕлме пулать е Пенси фончĕн районти управленине кĕрсе тухмалла. Адресĕ: Муркаш сали, Октябре 50 çул урам, 23 «а» çурт.

Программăпа интереслене-кенсен шучĕ ӳссех пырать. Çакă кăçал тӳлевсем пама тытăннипе те çыхăннă. Районĕпе çулталăк пуçланнăранпа кăçал 73 çын Программăна хутшăнма кăмăл турĕ, пĕтĕмпе 747 çынпа танлашрĕ. Республикипе вĕсен хисепĕ 130 пин ытла çын. Ку вăл – пирĕн обществăн ытларах активлăх кăтартакан пайĕ. Вĕсем ыранхи куна шанчăклăрах пăхасшăн, патшалăх ку енĕпе пулăшнин мелĕпе туллинрех усă курасшăн.

В. ШАПОШНИКОВ
калаçнă.

Пенси пирки – шкул çулĕсенченех

2012 çулхи сентябрĕн 25-мĕшĕнче Раççейре вĕренекен çамрăксен пенси пĕлĕвне ӳстерессипе вĕрентӳ проекчĕ пуçăнчĕ. Чăваш Республикинче Пенси фончĕн пур офисĕсемпе районсенчи уйрăмĕсенче те Пенси пĕлĕвĕн пĕрлехи кунĕнче шкулсенче аслă классенче вĕренекенсемпе студентсем валли экскурсисем йĕркелерĕç, «Пенси пирки çамрăклах шухăшла» темăпа видеоурок ирттерчĕç. Ăна видеоçыхăну мелĕпе РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн управляющийĕ Роза Кондратьева ертсе пычĕ. Пенси фончĕн районти управленийĕнче çав кун Муркаш шкулĕнче 11-мĕш «А» класра вĕренекенсем пулса курчĕç.

Видеоурока Чăваш Республикин Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерствин шкул çулĕчченхи тата пĕтĕмĕшле вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ Вячеслав Бычков та хутшăнчĕ. Вăл республикăри шкул ачисемпе педагогсене çавна каласа пачĕ. Пенси фончĕпе республика Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерстви пĕрле туса хатĕрленĕ килĕшĕве тĕпе хурса иртнĕ çул çамрăксем хушшинчи пенси пĕлĕвне ӳстерессипе пысăк ĕç туса ирттернĕ.

Фонд специалисчĕсемпе пĕрле пенси тематикипе шкулсенче, профессипе техника училищисенче, аслă вĕренӳ заведенийĕсенче 1000 ытла факультатив урокĕпе лекци ирттернĕ. Вĕсенче пенси законодательствин тытăмĕпе 20 пин ытла вĕренекен паллашма пултарнă. Занятисенче Чăваш Ене тӳлевсĕр илсе килнĕ 10 пин экземпляр Пенси фончĕн учебникĕпе, буклетсемпе тата памяткăсемпе усă курнă.

Пенси тематикипе шкул ачисем хушшинче сочиненисен республикăри конкурсне ирттернĕ. Конкурса 134 вĕренӳ заведенийĕнчен пурĕ 310 сочинени тăратнă. Конкурсра çĕнтернĕ 12 участника дипломсем, вĕсен педагогĕсене вара Тав çырăвĕсем парса хавхалантарнă. Çĕнтерӳçĕсем хăйсен сочиненийĕсен хăш-пĕр пайĕсене Чăваш Наци радио эфирĕнче вуласа панă.

Пĕрлехи пĕлӳ проекчĕн тепĕр тапхăрĕ вăл шкулсенчи «Манăн пулас пенси» электронлă хаçатсен Шупашкар хулинчи конкурсĕ пулса тăрать. Асăннă конкурс çĕнтерӳçисем спонсорсенчен – банксемпе патшалăхăн шутланман пенси фончĕсенчен – дипломсемпе парнесене тивĕçнĕ.

Пенси пĕлĕвĕ енĕпе факультатив урокĕсем 2012 çулхи декабрь уйăхĕччченех иртмелле. Республикăна тӳлевсĕр çĕнĕрен илсе килнĕ 20 пин учебник, брошюрăпа памятка ачасемпе вĕренекенсемшĕн пысăк пулăшу пулса тăрать. Вĕренекенсен пенси пĕлĕвĕн шайне вара пенси тематикипе ирттерекен олимпиада кăтартса парĕ. Ăна çитес çулталăк пуçламăшĕнче ирттерме палăртнă.

Сăн ӳкерчĕкре: пенси тематикипе шкул ачисем валли пĕлмелли сахал мар. Йышлăн хутшăнчĕç вĕсем видеоурока.

В. ШАПОШНИКОВ
сăн ӳкерчĕкĕ.

Йыйту – хурав

Маларах тухма май пур

– Инвалид ачасен ашшĕ-амăшĕн пенсие маларах тухас тесен мĕнле документсем хатĕрлесе памалла?

– Енчен те ачаран инвалида 8 çула çитиччен пăхса ӳстернĕ пулсан, ашшĕ-амăшĕнчен пĕрин 5 çул маларах пенсие тухма право пур (арçынсен – 55 çулта, хĕрарăмсен – 50 çулта). Çавна валли арçынсен 20 çултан, хĕрарăмсен – 15 çултан кая мар ĕç стажĕ кирлĕ.

Пенси илсе тăма тытăнма çак документсене тăратмалла пулать. Чи малтанах кусем вĕсем паспорт тата обязательнăй пенси страхованийĕн свидетельстви. Кунпа пĕрлех ача çуралнине çирĕплетекен свидетельство тата ача инвалид пулни пирки медицинăпа социаллă экспертиза освидетельствованийĕн акчĕ кирлĕ. Ачана 8 çула çитиччен пăхса ӳстернине çирĕплетме вара пурăнмалли çурт-йĕр органĕсем е вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем панă справка кирлĕ пулать.

Кунпа пĕрлех ĕç кĕнеки (унăн оригиналĕ тата копийĕ) пулмалла. Енчен те ĕç кĕнеки çук е унта ĕç тапхăрĕсене пурне те кăтартман пулсан ĕç килĕшĕвĕсене, ĕç стажне çирĕплетекен архив справкисене, ĕçпе тивĕçтерекен центртан панă справкăсене тăратмалла. Пенси виçи мĕн чухлĕ пуласси колхозра ĕçленĕ пирки панă справкăсем пулнинчен те килет. Ун чухне аттестатпа унăн копийĕ кирлĕ.

Тепĕр документ – 2002 çулхи январĕн 1-мĕшĕччченхи тапхăрти кирек хăш 60 уйăх хушшинчи (ытларах та юрать) уйăхри вăтам ĕç укçи (тупăш) шайĕ пирки панă справка. Ку справка 2000 – 2001 çулсенче уйăхри вăтам ĕç укçи шайĕ 1800 тенкĕрен каярах пулнă пулсан кирлĕ.

Асăннă пур документсене те хатĕрлесе çитерсен Пенси фончĕн управленине пырас пулать.

Парăм чыс тумасть

Предприятисемпе организацисем тата уйрăм предпринимательсем октябрĕн 12-мĕшĕ тĕлне страховани взносĕсем тӳлессипе Пенси фончĕ умĕнче мĕн чухлĕ парăмра пулнине кăтартни (тенкĕпе)

Цифрăсен колонкисенче парăм виçисем: 1. Ĕç пенсийĕн страхланă пайне тӳлессипе. 2. Ĕç пенсийĕн пухăнакан пайне тӳлессипе. 3. Обязательнăй медицина страхованийĕн фондне тӳлессипе.

«Герой» СХПК	74159	0	0
«Восток» СПК	36878	17399	12450
«Ударник» ФГУП	1909852	323058	396309
«Моргаушрайбыт» ООО	671764	197794	112105
Э.В. Яковлева ИП	7181	2486	2113
«Дружба» сад юлташлăхĕ	73565	2066	8334
«Лазурный» ГУП	21580	7470	6349
Э.В. Колесникова ИП	2088	1566	0
Л.Ф. Борцова ИП	7000	3000	1275
«Энергетик» сад юлташлăхĕ	16585	0	2750
«Трасса М-7» ООО	116109	11610	21040
«Волга» ООО	8902	8886	0
«ДААН» ООО	81633	20425	15534
«ВТМ» ООО	82681	16792	14710
«СпецТехСервис» ООО	13058	7242	11586
«Мастерсити» ООО	96800	25484	0
«Элтег» ООО	77821	13546	11759
Э.Н. Димитриева ИП	6606	3319	2821

Икĕ хутчен ӳстернĕ

Ĕç пенсийĕсен виçине индексацилени вăл Раççей Федерацийĕн Правительствин йышăнăвĕсемпе килĕшӳллĕн пенсионерсен пурнăç шайне хăпартас тĕллевпе ĕç пенсийĕсен шайне ӳстерсе пыни пулса тăрать.

Раççей Федерацийĕн законодательствипе килĕшӳллĕн Раççейре хаксем хăпарнине тата ĕç укçин вăтам шайĕ ӳснине кура ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн страхланă пайне, инвалида тухнине пула паракан ĕç пенсине тата çемьере тăрантаракана çухатнине пула паракан ĕç пенсине (асăннă пенсисен фиксированнăй базине шута илсе) индексацилеме пăхнă.

2012 çулта ĕç пенсийĕсен виçине индексацилене:

– 2012 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ĕç пенсийĕсем 7 процент ӳснĕ;

– апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ĕç пенсийĕсем 3,41 процент, социаллă пенсисем 14,1 процент ӳснĕ.

Вулакансене аса илтеретпĕр. Пенси фончĕн районти управленийĕнче тӳрĕ лини телефонĕ пур. Хăвăра интереслентерекен ыйтупа 62-8-91 номерпе шăнкăравлама пултаратăр.

Кăларăма В. Шапошников хатĕрленĕ.

Тăрăшуллă ĕçченсем

Сăн ӳкерчĕкре «Восток» хуçалăхăн Мулкачкассинчи сĕт фермин ĕçченĕсене куратăр. Анфиса Михайловнăпа Валериян Иванович Наумовсем (сăн ӳкерчĕкре иккĕмĕшпе виççĕмĕш) хăйсен ĕç ĕмĕрĕн пысăк пайне машинăпа ĕне сăвакан оператор пулса вăй хунă. Валериян Иванович 1969 çултанпах выльăх-чĕрлĕх патĕнче. Мĕн кăна ĕçлемен пулĕ вăл çак хушăра, анчах кашни ĕçрех ответлăха туйса пурнăçланипе палăрса тăнă. 20 çула яхăн ĕне сума çӳрекен мăшăрĕ те çемье династине çирĕп тытса пынă.

Сăн ӳкерчĕкре сулахайра вара вĕсен ĕçтешĕ Елена Витальевна Салдаева. Унченхи çулсенче доярка́ра, сыснасем пăхнă çĕрте тимленĕскер – халĕ мăйракаллă шултра выльăх самăртнă çĕрте.

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Ветеринари аптекисем кашни районтах пур

Юлашки çулсенче ветеринари аптекисем чылай уçăлаççĕ. Кăçал кăна «Россельхознадзорăн» республикăри управленине лицензи илме 10-а яхăн заявлени çырнă. Эппин, кунашкал ĕç-хĕл тупăш кӳрет, выльăх-чĕрлĕх те çынсем пекех чирлетçке. Паянхи кун тĕлне республикăра кунашкал аптека – 97. Çак таранччен ку енпе аппаланма 62 лицензи (çав шутра ветеринарин 21 бюджет учрежденийĕ, 19 усламçă, потребитель кооперацийĕн 13 аптеки тата ыттисем те) илнĕ. Эмелсене курттăммăн сутакан организацисен йышĕ те пĕчĕкех мар.

Чăннипе ял çыннисем рекламăсенче кăтартакан е кӳршипĕлĕшĕ сĕнекен препаратсене Шупашкара çитсех туянма тăрăшаççĕ. Пĕрисем чăххисене витаминпа тивĕçтерсе çăмарта ытларах илесшĕн, теприн выльăхĕ чирленĕ... Каплах хыпкаланмалла мар, теççĕ ветеринари специалисчĕсем. Ара халĕ кашни районтах аптека уçнă. Шупашкарта вĕсен йышĕ ыттисенчен нумайрах паллах – 16. Патăрьел районĕнче 8 аптека таранах хута янă. Ăнланмалла, унта выльăх нумай тытаççĕ. Етĕрне районĕнче те выльăх эмелĕ сутакан 9 вырăн пур. Муркаш, Вăрнарпа Елчĕк районĕсенче вара 5-шер аптека ĕçлет.

Анчах та эмел сутасси çав тери яваплă ĕç пулнине пурте асра тытаççĕ-ши? «Россельхознадзорăн» республикăри управленийĕн аслă эксперт специалисчĕ Оксана Викторова каланă тăрăх кăçал управлени инспекторĕсем 12 лицензиата тĕрĕсленĕ. Телее, нумайăшĕ суту-илӳ йĕркине пăхăнать. Çапах йĕркене пăснă тĕслĕхсем те пулнă. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутайри чĕр чунсен чирĕсемпе кĕрешекен станци ĕçченĕсем выльăх-чĕрлĕхе уйрăмах хăрушă чирсенчен срокран тухнă вакцинăпа (ăна çак учрежденин аптекинче сутнă) прививка тунине тĕпчесе пĕлнĕ. Пахалăхсăр вакцинăна тĕп тунă, айăплисене 76 пин тенкĕлĕх штрафланă.

«ЗооВетАгро» обществăн икĕ аптеки ветеринарире усă курмалли эмелсене упрассин правилисене пăсни çиеле тухнă. Суд йĕркене пăснăшăн 4 пин тенкĕлĕх штраф хунă.

Сăмах май, пĕр аптека ĕçĕпе кăмăлсăр пулнине палăртса çăхав çыракан та пулчĕ. Çиййĕнчех прокуратурăпа пĕрле тĕрĕслев йĕркеленĕ. Чăн та Шупашкар усламçин лицензи пулман, ăна административлă йĕркепе айăпланă.

Вăрмарти аптека тĕлĕшпе çур çул хушшинче икĕ çăхав таранах пулнă. Икĕ хутĕнче те çитменлĕхсене палăртнă инспекторсем. Пĕрремĕш хут килсен усламçă лицензи условийĕсене пăсни курăннă. Тепрехинче эмелсене упрассин условийĕсене шута илменнине пĕлнĕ. Çитменнине предприниматель суту-илӳ тăвакан аптекăна лицензире кăтартман. Халĕ Вăрмарсем çав аптекăна шиксĕрех кайма пултараççĕ, çитменлĕхсене пĕтернĕ.

Ветеринарире усă куракан эмелсен саккунсăр çаврăнăшне чарса лартас тĕллевпе йĕркеленĕ тĕрĕслевсем те лицензисĕр сутнă тĕслĕхе Çĕнĕ Шупашкарта палăртнă.

Н. ВАСИЛЬЕВА,
Раççейри ял хуçалăх надзорĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн специалисчĕ.

Районти ĕçпе тивĕçтерекен центрта

Вăхăтлăх ĕçпе тивĕçтереççĕ

Хальхи вăхăтра пуçламăш тата вăтам професси пĕлĕвĕ паракан учрежденисенчен вĕренсе тухакан 18 – 20 çулсенчи самăрăксен ĕçе вырнаçасси çăмăлах мар. Çавна май кун пеккисене вăхăтлăх ĕç вырăнĕ тупса парасси çине районти ĕçпе тивĕçтерекен центр пысăк тимлĕх уйăрать. Çакă вăл республикăра пурăнакансене 2011 – 2013 çулсенче ĕçпе тивĕçтерес тĕллевпе йышăннă ведомствăлла тĕллевлĕ программăпа килĕшӳллĕн пулса пырать.

Ку услугăпа яш-кĕрĕм пуçламăш е вăтам професси пĕлĕвĕн учрежденийĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн çулталăк хушшинче усă курма пултарать. Вăхăтлăх ĕçе вырнаçакансемпе ĕçпе тивĕçтерекен центр килĕшӳ тăвать.

Çулталăк пуçланнăранпа центр кун пек килĕшӳсене 2 тунă, 2 çынна вăхăтлăх ĕç тупса панă. Пĕри Пĕтĕм Раççейри куç курманнисен обществин Муркашри участокĕнче ĕç тăвакан секретарьте, тепри Йӳçкасси шкулĕнче бухгалтерта тăрăшнă. Вĕсене чи пĕчĕк виçерен кая мар ĕç укçи тата республика бюджетĕнчен хушса тӳлесе тăнă.

Вĕренсе тухакансем çакăн пек мелпе усă курса хăйсем илнĕ професси пĕлĕвне практикăра çирĕплетме пултараççĕ, яланлăх ĕç вырăнĕ тупассипе те вĕсен шанăç ытларах.

Хамăр инф.

Спорт

С. Кожевников палăрнă

Октябрĕн 18 – 21-мĕшĕсенче Çĕнĕ Шупашкарта Раççей шайĕнчи «Б» класлă бокс турнирĕ иртнĕ. Ăмăртăва çĕре яхăн çын хутшăннă. Район чысне Муркаш шкулĕнче вĕренекен С. Кожевников ăнăçлă хӳтĕленĕ. Вăл виçĕ кĕрешӳре вăй виснĕ. Хастар каччă Раççей спорт маçтăрĕн кандидачĕн ятне çĕнсе илнĕ. Тĕнче чемпионĕ, спортăн тава тивĕçлĕ маçтăрĕ В. Львов С. Кожевников çитĕнĕвĕшĕн, районта бокс шкулĕ ĕçленишĕн савăнать.

Хамăр инф.

Конкурсный отбор

Объявляется конкурсный отбор для включения в кадровый резерв администрации Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

Администрация Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о приеме документов кандидатов, желающих участвовать в конкурсном отборе для включения в кадровый резерв администрации Юнгинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 27 октября 2012 года.

Кадровый резерв формируется с учетом реестра должностей муниципальной службы, поступивших заявлений муниципальных служащих (граждан) и представляет собой список муниципальных служащих и лиц, не состоящих на муниципальной службе, отвечающих квалификационным требованиям, предъявляемым к соответствующим должностям, обладающих потенциальными способностями, необходимой профессиональной компетентностью для замещения вакантных или вновь образуемых должностей муниципальной службы, замещаемых без ограничения срока полномочий.

Для участия в отборе кандидаты для включения в кадровый резерв представляют следующие документы:

а) личное заявление;

б) собственноручно заполненную и подписанную анкету по установленной форме с приложением фотографии;

в) копию паспорта или заменяющего его документа (соответствующий документ предъявляется лично по прибытии на конкурс);

г) копию документов, подтверждающих необходимое профессиональное образование, стаж работы и квалификацию:

- копию трудовой книжки или иные документы, подтверждающие трудовую (служебную) деятельность гражданина;

- копии документов о дополнительном профессиональном образовании, о присвоении ученой степени, ученого звания, заверенные нотариально или кадровыми службами по месту работы (службы);

д) заключение медицинского учреждения об отсутствии заболевания, препятствующего поступлению на муниципальную службу;

е) отзыв непосредственного руководителя муниципального служащего с рекомендацией о включении муниципального служащего в кадровый резерв (характеристика – от гражданина, не состоящего на муниципальной службе);

ж) копию решения аттестационной комиссии (при наличии) о том, что муниципальный служащий подлежит включению в установленном порядке в кадровый резерв для замещения вакантной должности муниципальной службы в порядке должностного роста;

з) другие документы, предусмотренные законодательством, а также материалы, которые, по мнению муниципального служащего (гражданина), подтверждают его профессиональные заслуги (справки, публикации, дипломы, рекомендации, книги, брошюры, рефераты и другие).

Прием документов для участия в конкурсе осуществляется в течение 30 календарных дней со дня опубликования данного объявления (по 25 ноября 2012 года включительно) по рабочим дням с 8 до 17 часов по адресу: 429551, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юнга, ул.Малые Чуваки, д.34.

За дополнительной информацией обращаться по телефону 8 (83541) 69-8-07,

Адрес электронной почты: mrgjunga_pos@cbx.ru,

официальный сайт администрации Юнгинского сельского поселения - http://gov.cap.ru/main.asp?govid=431.

Василий СИПЕТ

Выляма та ăс кирлĕ

Калав

Аттене – Николай Иванович Тихомирова – яланах асра тытса

(Вĕçĕ. Пуçл. иртнĕ номерсенче).

Улатимĕр чăтаймарĕ, «шăччине» меллĕн çатăрласа тытнăскер, пире кĕтмесĕрех, Тарзан манерлĕ ихĕрме, асма пикенсе, хăй тăракан туратран талт! тапса ячĕ те траектори çулĕпе çĕмрен пек малалла вирхĕнчĕ. Эпир те, калăпсăр савăнса, алпастăланса, унран юлмарăмăр:

– У-у-у-у-у-у-уххх!!!

– Охо-хо-хо-о-о-о-о!!!

– Эхе-хе-хе-хе-е-е-е-е!!!

– Па-па-па-па-па-а-а-а-а!!!

Эпир вĕçетпĕр-р! Эпир – Тарзансе-е-е-ем! Эпир Тарзансе-е-е-ем! Эпир...

Сасартăк Улатимĕр енчен чашшш! чашлатса илчĕ: вăл анса тăнă туратти ача йывăрăшне чăтаймасăр чăштах хуçăлса-чĕрĕлсе аннă иккен. Шăчăрр-шăчăрр! шат! Хуçăлчĕç Микишпа Якур «шаччисем» те – юлташăмсем алхапăл çĕмĕрт вуллисен хушшинелле кĕрĕслетрĕç. Ак ĕнтĕ Улатимĕр çĕр çине пăлтăр-палтăр персе анни те палăрчĕ.

Мана вара урăхларах инкек кĕтнĕ. Эпĕ те хамăн «траекторие» чиперех парăнтартăм, анчах палăртнă турат çине анса тăрас тенĕ чух манăн çăпата сырнă ура чшшш! аялалла шуçрĕ те кайрĕ, хыççăнах пĕр-пĕринпе пĕтĕççе ӳснĕ виçĕ кукăрăç турат хушшине пашт хĕсĕнсе ларчĕ. Алăри «шăчă» та шартах хуçăлчĕ. Эпĕ, хама ӳкме парас мар тесе, пĕр-пĕр çирĕп туратран – çĕнĕ «шăчăран» ярса тытасшăнччĕ, анчах ун пекки, ал майли, умра пулмарĕ. Куç хупма та ĕлкĕреймерĕм – эпĕ пуç хĕрлĕ çакăнса тăратăп иккен! «Капкăна» лекнĕ ура чăтма çук ыратать. Ăна хăтарас тесе ку е тепĕр вулла аллăмсемпе çавăрса тытса тĕкĕнетĕп, пĕтĕм кӳлепĕмпе çӳлелле туртăнатăп, мекеçленетĕп – усси çук. Сывлăш пӳлĕннĕçемĕн пӳлĕнет, пит-куçа, пуç мимине хĕвĕннĕ юн халь-халь пĕрхĕнсе тухать тейĕн.

Çакна курсан Микиш юнăхса ларнă питне-куçне, шăйрăк тутине пĕркелесе, шăлне çыртса вырăнĕнчен тăчĕ те ман пата мăштăр-мăштăр уткаласа пычĕ, вара васкамасăр ман ума чĕркуçленсе ларчĕ.

– Тĕрĕн аллусемпе ман хул пуççи çине, – çирĕппĕн хушрĕ вăл.

Эпĕ васкасах вăл хушнине турăм. Микиш майĕпен мана çĕклесе те çĕклентерсе йывăррăн ура çине тăчĕ. Çапла майпа аранах манăн туратсем хушшине хĕсĕнсе ларнă урана ирĕке кăларма май пулчĕ. Микиш пулăшнипех эпĕ çĕмĕрт кĕтти çумне, çеремлĕ çĕр çине, анса выртрăм, унтан хам тĕллĕнех ура çине тăранçи турăм. Инкек çăварне лексе курнă ури вара çав-çавах ыратать-ха, ăш-вара кисретнĕ сехри те сĕвĕрĕлсех пĕтмен.

Манран инçех те мар какрака çĕр çинче ыратнипе тутине пĕрĕнтеркелесе Улатимĕр ларать. «Ай-й-й! Ай-й-й! – айлатса йынăшкаласа илет вăл сылтăм аллине çĕклеçĕкле (тепĕр кунне тухтăр патĕнче паллă пулчĕ: унăн çав алли лăкаç сикнĕ иккен). Çăпати йăтăнса тухнă.

Улатимĕр çумне сулахай тӳш шăмми ыратнине пула урине сĕтĕркелесе, сăмсапа нăшт-нăшт туртса, самаях ăшăрханă Якур пырса ларчĕ. Сăнĕ-пичĕ вашак. Çиллес. Сиввĕн хĕмленекен хура куçĕпе мана йăпăрт сĕртĕнсе илчĕ те сулахай йĕм пĕççине чĕр куççи таран хăпартрĕ: ура сыппи çинчи ӳт тирĕ пĕр тĕлте самаях виселеннĕ иккен.

– Мур илесшĕ, шăпах йĕке тымар çине лаплаттарнă иккен эпĕ, – шăл витĕр сăрхăнтарса кăларчĕ çакскер. Унтан пуçне икĕ енчен аллисемпе тĕкĕлесе йӳççĕн куланçи туса хытнă сасăпа илтĕни-илтĕнми çиллĕн хушса хучĕ:

– Тар-зан-сем...

Шалтан хĕсĕнсе-пăрланса, эрлĕк-ӳкĕнӳ куллине путса, хăштик-хăштик сывлакаласа эпир Микишпа иксĕмĕр тăратпăр, ыттисем мăкавлăн лараççĕ.

Çак вăхăтра анкарти алăкĕ кăррик! сас кăларчĕ илчĕ. Эпир пурте харăсах куçсене сасă илтĕннĕ еннелле вĕçтертĕмĕр – анкартине атте кĕрет иккен. Хăй ĕç çи-пуçĕпех. Хамăр айăпа уççăнах туйса шанк хытса кайрăмăр. Пурин те пичĕсем пĕçерсе илчĕç. Шик туйăмĕ, паллах, ытларах мана çулса илчĕ: мĕн калĕши атте пирĕн вăйăран тухнă сăтăра – хуçса-ватса пĕтернĕ çамрăк çĕмĕрт кĕттине – курсан? Псăркка памĕ-ши? «Çĕмĕрт кукли» çитермĕши?

Пĕлетпĕр-ха, атте ăш-пиллĕ, уçăмлă, çынна яланах тарават, сăмах-юмах та шӳт маçтăрĕ, темĕнле кӳренсен е çилленсен те хăйĕн шалти вĕчĕхне пули-пулми пĕрхĕнтерсе ямасть, анчах та...

Атте пире сăнакаласа тăчĕ-тăчĕ те:

– Ваçук, эпĕ сана шыратăп. Ĕç пурччĕ, – терĕ. Унтан, шахвăртса: – Тин çеç йывăç тураттисем хуçăлнă сасăсем илтĕннĕ пек туйăнчĕ, çĕмĕрт тĕммине аркатмарăр пулĕ те эсир унта? – тесе ыйтрĕ.

Пирĕн чĕлхесем çыхлансаçыхăнсах ларчĕç ĕнтĕ. Çакна курса атте васкамасăр пирĕн паталла утрĕ.

– Эпир... Эпир тĕмĕре Тарзана евĕрлесе ярăнас тенĕччĕ те, – «пасарнă» куçăмпа аттене сĕртĕнкелесе, çав-çавах шик авăрĕнчен тухаймасăр, анчах çав туйăмах ирĕксĕрлесе хистенипе тинех чĕлхе тĕввине салтса ятăм эпĕ тĕрĕслĕхе нимĕнле кĕрĕк айне те пытарма май çуккине кура.

Улатимĕрпе Якур та мăран хускалкаласа ура çине тăчĕç.

Пирĕн çывăхах çитсен атте пирĕнпе ăшшăн сывлăхлашрĕ (пирĕн шуйхăнчăк сăн-пите асăрхаса, тен пире лăплантарас тесе çапла турĕ?), унтан çĕмĕрт кĕттине тулаш енчен те, шалтан та тимлĕн пăхса çаврăнчĕ. Эпир вара хамăр сурансене пула йĕрмĕшме мар, вĕсем çинчен шăл шурри кăтартма та хăймастпăр, çав вăхăтрах атте çинчен те куçăмăрсене илместпĕр.

– Э-хе-хе, – куçне авăнчăк-хуçăк йывăç тураттисем тăрăх шутарнă май пуçне сулкаласа илчĕ атте, – çĕмĕрте самаях мăкăлтанă иккен эсир, алхассем. Тарзан йывăççсене çĕмĕрсе-ватса çӳремен вара... Çĕмĕрт вăл патрак йывăç, джунглири лиана, манго, бамбук, нар е пĕлĕт маччинех тĕкĕнсе ӳсекен пальма пек пиçĕ мар, туратлă, вуллисене те спорт шăччи вырăнне усă курма меллĕ мар.. Ӳлĕмрен ас тăвăр çакна...

Унтан каллех пирĕн пата пырса тăчĕ те сăмахне çапла вĕçлерĕ:

– Ачасем, тата эп сире çакна та каласшăн: вылясса выльăр та, анчах ан манăр: выляма та ăс кирлĕ. Пурнăçра яланах ура мар, ăс чуптăр малта. Ахальтен мар халăхра пĕрре касиччен çиччĕ виçме хушаççĕ. Илтнĕ пуль?

Хĕрхӳ, анчах ĕмĕрлĕхех асра юлакан тӳрĕ пурнăç маякĕ пулса ӳкрĕç пирĕн чун-чĕрене аттен çак сăмахĕсем.

Ак ĕнтĕ ĕшне. Самаях анлă вăл, тӳрем вырăнта. Парка, чашкăрса ӳсекен курăкпа, пин-пин чечекпе хупланнă вăл. Вĕсен шăрши çăтса тăранайми тутлă, сиплĕ.

Шăпах çак ĕшнере ман тăван ял çăви. Çавна пулах-и тен ĕшне таврари йывăççем хурлăхлă караула тăнă салтаксене аса илтереççĕ. Кайăксем еплерех юрлаççĕ! Юрлаççĕши? Тен хӳхлесех макăраççĕ?

Леш тĕнчене ăсаннă манăн ентешсем ĕмĕрлĕхех вырăн тупнă кунта. Ырри те, усалли те, ятли-сумли те, телей пĕрчине тивĕçни те, сумсăрри те, йӳçĕк шăпалли те – пурте пĕр-пĕринпе танлашнă çак çĕрте. Вĕсене асăнма килнĕ тăван-пĕтенĕ, юлташĕсем, пĕлĕшĕсем халĕ кунта туп-туллиех.

Анчах çĕр çинчи пурнăç ырă çынсен ĕçĕ-хĕлĕ çинче кăна тытăнса тăрать. Атте, вун пĕр орденпа медале тивĕçнĕ çĕр-шывăн паттăр хӳтĕлевçи, патвар чунлă, ĕçчен, пысăк сас паллипе çырмалли çавăн пек çынсенчен пĕриччĕ. Ак пырăп та халĕ унăн вил тăпри патне, чĕрĕ чечек çыххи хурăп, ырă кăмăлĕшĕн, пархатарлă ĕçĕсемшĕн, мана ăспа пурăнма, пурнăç çулĕпе тĕрĕс, йывăрлăхсене çĕнтерсе ырри патне çеç утма вĕрентнĕшĕн тав туса, пуç тайса сăвап сăмахĕ калăп.

Кил тата хушма хуçалăх

Пĕчĕк вăрттăнлăхсем

– Сĕте ытти апат-çимĕçпе упрасан унăн тути çухалать.
– Вĕрекен сĕте пĕр чей кашăкĕ сахăр ярсан вăл нумайччен упранать.
– Пĕвере ăшаличчен 1–2 сехет сĕтре тытсан унăн тути лайăхланать.

Пирĕн тĕпел

Йӳçĕтнĕ купăста

Кăçал купăста янăх мар тухăç пачĕ. Нӳхрепре паян вăл нумай. Купăстана йӳçĕтсе çисен лайăхрах-ши е маринадласан? Çак ыйтусем тавра мĕн шутлаççĕ-ши ăста пахчаçăсем?

И. ПАРГЕЕВ.
Ярапайкасси ял тăрăхĕ.

Ял çыннисем килти хушма хуçалăхра çулленех купăста нумай туса илеççĕ. Çавна май унпа усă курасси çинчен калаçнă чух сăмах час-часах йӳçĕтнĕ купăста çине кĕрсе каять.

Мĕнпе лайăх-ха йĕçĕтнĕ купăста?

Пирĕн климат условийĕсенче йӳçĕтнĕ купăста – хĕллехи вăхăтра организма С витаминпа тивĕçтермелли чи меллĕ çăл куç. Тĕрĕс йӳçĕтнĕ купăстара С витамин хисепĕ лимонрипе танлашать. Йӳçĕтнĕ купăстана çĕр улмипе çисе курнă-и? Хĕл кунĕсенче унран пахарах апат тупаймăн та!

Кил хуçи хĕрарăмĕсен тĕп тĕллевĕ – йӳçĕтнĕ купăстара усăллă енсене ытларах упраса хăварасси. Çакна валли йӳçĕтнĕ купăстана сивĕ çĕрте тытмалла, унта рассол шывĕ çителĕклĕ пулмалла. Йӳçĕтнĕ купăстана шăнтма та пулать. Анчах кун пек тусан упранă чух вăл пĕр уйăхра С витамин виçине 10–15 процент çухатать. Шăнтнă купăстана ирĕлтерсе тепре шăнтас пулсан С витамин 30–40 процент таран çухалать. Йӳçĕтнĕ купăстана шывпа çума юрамасть: кун пек тусан унăн пĕтĕм пахалăхĕ юхса тухать.

Купăстана йӳçĕтнĕ чух клюква, кишĕр, кĕтмел, пан улми хушни С витамина ытларах упрама май парать. Купăстана йӳçĕтсен унри С, В2, РР витаминсем тата ытти усăллă япаласем рассола тухаççĕ. Çавăнпа та халăх медицининче иммунитет хавшанă çынсене, аппетита лайăхлатма, йӳçĕтнĕ купăста рассолне ĕçме сĕнеççĕ. Ăна ăшăлла, апатланас умĕн е апатланнă вăхăтра çуршар стакан ĕçмелле. Шăл тунисем ыратнă чух унпа çăвара чӳхени те усăллă.

Маринадланă купăста вара йӳçĕтнинчен катара тăрать. Мĕншĕн тесен маринадланă чух хушнă уксусра усăллă бактерисем нумай вилеççĕ.

В. СЫТИНА, пахчаçă.

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕ.

Йӳçĕтнĕ пан улми

Кăçал пан улми ăнса пулнăран ăна эпир нӳхрепе самай татса хутăмăр. Ку лайăх-ха, анчах мана паян ăна йӳçĕтсе усă курасси шухăшлаттарать. Мĕнле рецепт усăллăрах-ши?

А. ИВАНОВ.
Çатракасси ял тăрăхĕ.

Хĕл хырăмĕ пысăк тенĕ май çав вăхăта тĕплĕн хатĕрленессине ял çынни самантлăха та асран кăлармасть. Пан улми йӳçĕтме çирĕп, вăтам виçеллĕ, сиенленмен çимĕçсене суйласа илмелле. Татнă хыççăн вĕсене кăштах вырттарни лайăх кăна. Çуллахи сортсем йӳçĕтме кайманран тата вĕсен вăхăчĕ те иртнĕрен паян хĕле валли тесе татса хунă пан улмисене йӳçĕтме шăпах меллĕ.

Çак ĕçе туса ирттерме кил хуçине тулă е ыраш улăмĕ кирлĕ пулать. Вăл пан улмине тутă кĕртет, лайăх шăршăллă, хитре тĕслĕ тăвать. Кашни 50 кг пан улми пуçне 2 кг улăм çителĕклĕ. Малтан ăна вĕри шывпа пĕçертмелле.

Ĕç пахалăхĕ пичке пахалăхĕпе тачă çыхăнура. Юман пичке пулсан аванрах. Малтан ăна 2 процентлă сода шывĕпе çумалла, вĕри шывпа вĕрилемелле. Унăн тĕпне, айккисене улăм сармалла та пан улмисене сийĕн-сийĕн хумалла. Юлашкинчен çиелтен улăм, таса татăк сармалла та йывăр япалапа пусăрăнтарнă ывăс хумалла.

10 кг пан улми пуçне 5 л вĕретсе сивĕтнĕ шыв, 70–80 грамм тăвар, 150–200 грамм сахăр песукĕ кирлĕ пулать.

Пан улми тутине лайăхрах тăвас тесен тутă кĕртмелли çимĕçсем (сельдерей, тута кĕпçи, хура хурлăхан çулçи) тата пыл хушни вырăнлă.

Çапла хатĕрленĕ йӳçĕтнĕ пан улми кĕрхи кирек хăш уявра та сĕтеле пуянлатĕ.

А. ЯКОВЛЕВ, пахчаçă.

Вăй хунийĕ çу каça савăнтарать тухăçпа

«Эпир ĕçрен катара тăман»

Кăçалхи çанталăк йĕпе-сапаллă пулчĕ. Анчах Шупашкарта та, район центрĕпе ытти суту-илӳ вырăнĕсенче те «Кĕр парнисем» ятпа сутуилӳ тăтăшах анлă пынине асăрхама пулать. Килти хушма хуçалăхрах, хресчен (фермер) хуçалăхĕ йĕркелесе унти анлă мар уй-хир лаптăкĕсенчех пысăк тухăçлă ял хуçалăх культурисем туса илекенсене куратăп та вĕсен ĕçĕшĕн хĕпĕртетĕп. Урăхла пулма та пултараймасть. Вĕсем-çке йывăрлăхсем умĕнче алă усса ыррине ютран килсе туса парасса кĕтсе лараканнисем мар. Хăйсен вăйĕ çине ытларах шанаççĕ çак паттăрсем. Шанаççĕ те иртен пуçласа сĕм каçчен хирте е килти хушма хуçалăхри йăрансем çинче тар юхтарса ĕçлеççĕ. Юптарури пек çу кунĕсене юрă юрласа ирттермеççĕ вĕсем. Çакăн пек ĕçченсен сĕтелĕсем паян уйрăмах тулăх пулнинчен те тĕлĕнме кирлĕ мар.

– Сухан та, ыхра та шултра пултăр тесен çу каça йăран хушшинчен тухмалли çук. Çумне те вăхăтра иртмелле, кăпкалатассипе те кая юлмалла мар, шăварас-апатлантарас йĕркене те çирĕп пăхăнса пымалла. Çак тимлĕх харама кайманни паян пире савăнтарать, çĕнĕ тĕллевсем йышăнтарать, – терĕ шултра ыхра ещĕкне машина çинчен тавар туянакансем умне кăларса лартнă май вăр-вар хĕрарăм. Ку вăл Шаптак Муркашра хушма хуçалăх тытса пурăнакан Любовь Витальевна Майкова **(иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре)** пулчĕ. Пĕр килограмм сухан 15 тенкĕ, ыхра 150 тенкĕ пулни те пахча çимĕç хаклă тесе тавар туянакана айккалла сирмест.

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Ойкасра пурăнакан Александр Иванович Толстовăн хресчен (фермер) хуçалăхĕ те кил хуçисем ĕçсене вăхăтра тата пĕлсе йĕркелесе пынипе юлашки çулсенче ура çине çирĕп тăрса пырать. Акă юнашар лаптăкра эпĕ пасарпа иртсе пынă чух хресчен (фермер) хуçалăхĕн ертӳçи мăшăрĕпе Людмила Виссарионовнăпа автомашина çийĕнченех купăста сутатчĕ. Ăнса пулнă пахча çимĕç катаранах курăнать. Çавăнпа вĕсем патĕнче тавар туянакансем те йышлăччĕ.

– Купăстана кăçал 10 гектар лартрăмăр та технологие пăхăнассине тĕп вырăна кăлартăмăр. Тухăç пĕчĕк пулчĕ теес килмест. Çитес çул кăçалхи çитменлĕхсене пĕтерсе татах та тупăшлăрах ĕçлес тĕллевсем пур. Çĕр вăл хăйĕн çинче тар кăларса ĕçленине юратать. Эпир вара çу каça ĕçрен катара тăман, – кăмăллăн калаçать купăстан «Сельма» сортне тултарнă сеткăна тараса çине хунă май Л.Толстова (**пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре**).

«Ĕçрен ан хăра – вăл хăй санран хăратăр», – вĕрентет ваттисен сăмахĕ. Паян пасарта тĕл пулнă çĕр ĕçченĕсем хресчен ĕçĕнчен хăраманни мана иккĕлентермерĕ. Вĕсен çутă ĕмĕчĕсем ял хуçалăхĕн малашлăхĕ пуррине кăтартса параççĕ. Малашлăх пур пулсан ăна çывхартма тар юхтарса ĕçлемелле. Çакна хăйсен сăмахĕсенче Л. Майкова та, А. Толстовпа Л. Толстова та нумай тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕç.

А. БЕЛОВ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.

Туянас-тăк туянас

Качакан сĕчĕ кăна мар, тислĕкĕ те усăллă

Ялсем ватăлаççĕ. Шултра выльăх-чĕрлĕх – ĕне – тытакансем сахалланса пыраççĕ. Утă-улăм хатĕрлеме вăй-хăват кирлĕ. Мĕн тумалла? Качака ĕнене ылмаштарма пултарать-и?

Ĕне усранине хуплаштарас пулсан сĕт лайăх паракан ăратлă качака илмелле. Пур качака та пĕр мар. Сĕтлĕ качакасем - зааненски ăратлисем. Сĕчĕ вĕсен тутлă, кунне 5 литр таран параççĕ. Тĕнчере рекорда кĕнĕ цифра: çулталăк хушшинче – 2235 литр.

Качакана тăрантарма апат-çимĕç ĕнерен 6 хут сахалрах кирлĕ. Вĕсем утă, тĕрлĕ йывăçсен милĕкĕсене, купăста, пан улми, кишĕр, кăшман, сĕлĕ çиеççĕ. Çулла ирĕк вырăна, курăк çине кăкарма пулать.

Качака сĕчĕ, медицина специалисчĕсем палăртнă тăрăх, хĕрарăмăн кăкăр сĕчĕ пекех. Унта чĕре лайăх ĕçлеме кали чылай, тĕрлĕрен витаминсем пур. Çавăнпа качака сĕт-турăхĕ пĕчĕк ачасене те, ватăлакан организма та усăллă. Вăл тĕрлĕрен чир-чĕртен (диатез, астма, вар-хырăм чирĕсем, шăнăрсем ыратни) тасалма пулăшать. Туберкулеза та çĕнтерет, теççĕ.

Диетологсем качака ашне ачасене те, ватă çынсене те çиме сĕнеççĕ. Тĕрлĕрен чирпе аптăракансене те çак аш усăллă.

Хуçалăхра качака тислĕкĕ те юрăхлă. Ял хуçалăх специалисчĕсем çырнă тăрăх унта кали, фосфор, азот ĕне тислĕкĕнчен нумай, усси те пысăк. Хăватне кура анкарти валли качака тислĕкĕ ĕне тислĕкĕнчен 2–3 хут сахалтарах каять.

Хакĕ. Паллах, ĕнерен йӳнĕ. Анчах та ăратлă качака путекки сахал тăмасть. Çакна выльăх-чĕрлĕх усраса курнă кашни çын пĕлет. Ăратлă качакан усси хакĕпе часах саплашăнать. Çавăнпа кун пек сывлăхшăн усăллă качака илес пулсан çак телефонпа шăнкăравласа пĕлме пулать: 8(8352)36-10-21.

Валентина ТРОФИМОВА.

Елшик ялĕ.

Вулаканпа калаçатпăр

Выльăх тухтăрĕ

Ялта пурăнаканăн килти хушма хуçалăхĕнче мĕн авалтан выльăх отраслĕ малти вырăнта. Хресчен выльăх-чĕрлĕхрен хушма тупăш илме тăрăшать. Çак укçа-тенкĕпе вăл кил хуçалăхне тытса пырать те ĕнтĕ.

Ял çыннине выльăх-чĕрлĕхе таса сывă усрама ветеринари ĕçченĕсем яланах пысăк пулăшу параççĕ. Турайри ветеринари лечебницине илер-ха. 11 ял кĕрет вăл пăхса тăракан территорие. Нумай хушма хуçалăхра мăйракаллă шултра выльăх тытаççĕ.

